## Ача çулталăкĕ

# Сывлăх çулĕпе



“Ачасем – пурнăç çеçкисем” тетпĕр. Черчен “çеçкесене” пурин те илемлĕ, çирĕп те сывă курас килет. Шетмĕпуçсем килетпе кăна çырлахса лармаççĕ, çитĕнекен ăрăва сывă пурнăç çулĕ çине кăларас тесе тăрăшаççĕ.

Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнче Шетмĕпуç шкулĕнче иртнĕ Сывлăх кунĕ пысăк, хаваслă уява – сывă пурнăç, спорт уявне – çаврăнчĕ. Пурне те çунатлантарчĕ, хавхалантарчĕ вăл: шкул ачисене те, вĕрентекенсене те, ашшĕ-амăшне те. Иртен-çӳрен ăмсанса пăхрĕ пулĕ çав кунхине шкул картишне. Сарă хĕвел те кӳршĕ яла васкамарĕ, шкул тăррине ларса ырă куçĕсемпе хаваслă хĕвĕшĕве сăнарĕ. Сак сыхласа ларакансем курăнмарĕç йĕри-тавра: сывлăх уявĕ пурне те пĕрлештерчĕ, савăк, хĕрӳ кăмăл парнелерĕ.

– Сывлăх – нимĕнпе виçми хаклă мул, – терĕ уява уçнă май шкул директорĕ А.В. Степанова. – Спортпа туслă ача вĕренӳре те ĕлкĕрсе пырать. Пур ĕçре те маттур вăл. Ача çулталăкне çакăн йышши уявсемпе пуянлатсах пырасчĕ!

Спорт кунне 5-мĕш класра вĕренекенсем хаваслă юрриташшипе, сăввисемпе илемлетрĕç. Физкультура учителĕ Надежда Аркадьевна Волкова разминка ирттерчĕ: ачасемпе пĕрле вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕ те хăпартлансах хутшăнчĕç спорт, сывлăх ташшине. Хыççăн ачасем хăвăрт чупассипе ăмăртрĕç. Класс ертӳçисем те вĕренекенĕсемпе пĕрле старта тухрĕç. Чи хăвăрт чупакан маттурсене уяв йĕркелӳçисем – Л.А. Серафимовапа Е.Е. Андреева вĕрентекенсем – “Растишка” йогуртпа сăйларĕç: “Татах ӳс, тĕреклен!”

Çерçи ушкăнĕ пек вĕлтĕр-р! тăваççĕ шăпăрлансем стартран. Класс ертӳçисем хавхалантарса пынипе пĕр çаврăма ним мар парăнтараççĕ. Хаваслăн чĕвĕлтетсе финиш йĕрне пусаççĕ.

Старта вĕрентекенсемпе ашшĕ-амăшĕсем те тухрĕç. Ачасем вĕсемшĕн каçса кайсах “чирлерĕç”, хирĕç чупса хавхалантарчĕç. Сывлăх уявне ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров та хутшăнчĕ. 4-мĕш класс шăпăрланĕсемпе ăмăртăва тухрĕ вăл. “Сывă ачасем – ашшĕ-амăшĕн савăнăçĕ кăна мар, çĕршыв телейĕ, çутă пуласлăхĕ те”, – пĕчĕк спортсменсене саламларĕ Николай Поликарпович.

Уяв кунĕ спортзала куçрĕ. “Хаваслă стартсене” вĕрентекенсем те, ачасем те хутшăнчĕç. Ачасен командисем хушшинче Шетмĕпуç спортсменĕсем çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕç. Вĕсем учительсен командипе вăй виçрĕç, ку ăмăртура вара пысăк, çутă туслăх пуç пулчĕ. Ачасемпе вĕрентекенсем волейболла та вылярĕç.

Сывлăх уявĕнче тунсăхласа ларакан пулмарĕ. Шкул ачасен куллипе, хаваслă сассипе тулса илемленчĕ. Çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм ытамларĕ пурне те.

Çак уява кашни чĕрĕкре ирттерме палăртнă Шетмĕпуç шкулĕнче. Ачасен сывлăхне пысăк тимлĕх уйăраççĕ кунта. Сăмахран, вĕренӳ кунне ачасем яланах ирхи зарядкăран пуçлаççĕ. Спорт, сывлăх çулĕпе хавасланса утаççĕ Шетмĕпуçсем.

**Ирина СТЕПАНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: 5-мĕш классем хушшинче малти вырăна тухнă Ваня Иванов; Сывлăх уявне шкулĕпех хутшăнчĕç.**



## Спорт

Мартăн 31-мĕшĕнче район администрацийĕн методика пӳлĕмĕнче шашка ăмăртăвĕ иртрĕ, 3 команда хутшăнчĕ. Хĕрарăмсем хушшинче Алевтина Авдеева (Моргаушрайгаз) пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Иккĕмĕшĕнче Наталья Репина (“Оринино” хуçалăх) пулчĕ. Виççĕмĕш вырăна Анфиса Анисимова (“Моргаушавтотехсервис” ОАО) тивĕçрĕ. Арçынсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Леонид Андреев (Муркашри тĕп больница) тухрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Владимир Афанасьев (Мăн Сĕнтĕр шкулĕ), Александр Ермолаев (Йӳçкасси ял тăрăхĕ) пайларĕç. Командăсем хушшинче пĕрремĕш вырăна “Оринино” хуçалăх тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăнта Мăн Сĕнтĕр шкулĕ пулчĕ. Виççĕмĕш – Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх.

---

Апрелĕн 1-мĕшĕнче Москакасси ял тăрăхĕнче Григорий Евгеньевич Кудьков ОМОНовеца халалланă ăмăрту иртрĕ. Ăна улттăмĕш çул ирттереççĕ. Кăçал 6 команда хутшăнчĕ. Вĕсем Шупашкар хулинчи ОМОНовецсем, Москакассипе Оринин ял тăрăхĕ, Москакасси шкулĕ, “Ударник” хуçалăх, Шупашкарти СБС.

Хĕрӳ кĕрешӳре пĕрремĕш вырăна Москакасси ял тăрăхĕ тивĕçрĕ, вĕсене куçса çӳрекен кубокпа чысларĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Оринин ял тăрăхĕпе “Ударник” хуçалăх командисем пайларĕç. Çĕнтерӳçĕсем медальсене, Хисеп хучĕсене тата асăнмалăх парнесене тивĕçрĕç.

## Йыхравлатпăр

**Апрелĕн 7-мĕшĕнче** Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе ял хуçалăхĕсен, организацисемпе учрежденисен физкультура командисем хушшинче Муркаш районĕнче мала тухассишĕн шашкăлла выляссипе ăмăрту иртет, 10 сехетре пуçланать.

Команда шутĕнче 1 представитель, 3 арçын, 1 хĕрарăм пулмалла.

**Апрелĕн 7-мĕшĕнче** Ярапайкасси ялĕнче 10 сехетре Совет Союзĕн Геройĕ И.Г. Мешаков парнисене çĕнсе илессишĕн волейболла выляса ăмăртаççĕ.

Ăмăртусен программинче:

волейбол (9 участник), пăт пуканĕ ывăтасси (1), вĕрен туртасси (4), пăшалтан пересси (1).

**Апрелĕн 8-мĕшĕнче** Тивĕш ялĕнче ЧАССР ял хуçалăх тава тивĕçлĕ ĕçченне, ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутатне Александр Михайлович Михайлова халалланă тата унăн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн арçын командисем хушшинче волейболла выляс енĕпе уçă турнир иртет, 10 сехетре пуçланать.

## Редакци почтинчен

# Кайăк кунне уявларĕç

Кайăк кунне уявласси Тивĕшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта йăлана кĕнĕ. Акă, кăçал та пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче вĕренекенсем уроксем хыççăн актовăй зала пуçтарăнчĕç.

Уява биологи учителĕ П.А. Ефимов ертсе пычĕ, вăл кĕскен Кайăксен кунĕ уявăн историйĕ çинчен каласа пачĕ. Вĕренекенсем кайăксем çинчен сăвăсем вуларĕç. В.А. Александрова ертсе пынипе “Кайăксем – пирĕн туссем” литмонтаж кăтартрĕç. Вĕсем “Пирĕн пултарулăх” стенд хатĕрленĕ. Кунта вĕренекенсен тĕрлĕ кайăксене сăнланă ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарнă.

Юлашкинчен “Кайăк тĕнчи” викторина пулчĕ. Викторина ыйтăвĕсем çине В. Смирнов (9 кл.), Р. Иванов (3 кл.), И. Иванов (4 кл.) тулли хуравсем пачĕç. Конкурссенчи çĕнтерӳçĕсене грамотăсем парса чыс турĕç.

**Анжелика ЕФИМОВА, 7 класра вĕренекен.**

---

# Пуху интереслĕ иртрĕ

Пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Атапай шкулĕнче ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура ача-пăчана вĕрентес, вĕсен сывлăхне упрас, тĕрĕс воспитани парас ыйтăва хускатрĕç. Ашшĕ-амăшĕсене виççĕмĕш чĕрĕк итогĕсемпе паллаштарчĕç.

С.И. Блинова фельдшер пухăннă çынсене туберкулез чирĕ çинчен каласа пачĕ. Унтан мĕнле сыхланмалли майсемпе паллаштарчĕ.

7-мĕш класра вĕренекен А. Быков амăшĕ вара шкул коллективне парне парса хавхалантарчĕ, ачине вĕрентнĕшĕн тав турĕ.

Кайран вара “Айтăр-ха, хĕр ачасем” конкурс иртрĕ. Ку конкурсра 6, 7, 8 класра вĕренекенсем хутшăнчĕç. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн 1-мĕш вырăна А. Замкова (8 кл.), 2-мĕшне – Е. Блинова (7 кл.), 3-мĕшне – О. Багрова, Е. Колбасова йышăнчĕç. Конкурса çакăн пекех Н. Ступина, З. Соколова хутшăнчĕç.

Маттур та иккен хĕр ачасем!

**Елена КОЛБАСОВА, 7 класс.**

Атапай шкулĕ.

## МИЛИЦИ ХРОНИКИНЧЕН

# Çынна сывлăх сунар е ...

Районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансем саккуна пăсса сăмакун, спирт пур шĕвекпе суту-илӳ тăвакансене шырас тĕлĕшпе час-часах профилактика ĕçĕсем, рейдсем туса ирттереççĕ. Чăнах та, çакăн йышши операцисене ăнăçлă иртнине палăртма пулать, мĕншĕн тесен кăсăруклисен аллине сахал мар усламçă çакланать. Çапах та эрех сутуçисем вăрманти кăмпа евĕр “шăтсах” тăраççĕ. Хăшĕсене тата пĕрре, иккĕ явап тыттарнă пулин те, çак усламран писесшĕн мар. “Ара, пире укçа пăсать-и” – теççĕ-ши?

Акă, мартăн 7-мĕшĕнче Опрыскъяль ялĕнче, “Суррогат” операци вăхăтĕнче, 1938 çулта çуралнă Çамрăксен урамĕнчи арçынна тытма тивнĕ. Вăл хăйсен ялĕнче пурăнаканскерне 1 литр спирт пур шĕвеке çĕр тенкĕпе сутнă. Çапла, пĕрре хăнăхнă йăлана пăрахма йывăр пулас, мартăн 20-мĕшĕнче вара спирт пур шĕвеке татах сутма пикенет. Хальхинче çур литршăн хĕрĕх тенкĕ илсе юлать. Анчах та çак усламçă икĕ хутчен кăна çак ĕçпе аппаланнă теме пулать-ши? Ку вара иккĕленӳллĕ пек туйăнать. Çапла вара сутуçă тĕлĕшпе административлă протокол çырма тивнĕ.

Çавăн пекех, Анаткас Хачăкри Шоссе урамĕнчи 1936 çулта çуралнă арçын та ку ĕçпе пĕрре мар аппаланни паллă. Мартăн 15-мĕшĕнче килте хатĕрленĕ спирт пур шĕвекĕн çур литрне 50 тенкĕпе сутнине тытнă. Мартăн 20-мĕшĕнче вара “Суррогат” операцие ирттерекенсем каллех çак усламçă патне килсе тухнă. Çапла вара, хальхинче Анаткас Хачăкрах пурăнаканскерне 1 литр спирт пур шĕвеке 80 тенкĕпе ярăнтарать. Сутуçипе туянаканни те кăсăруклисен списокĕнче тахçантанпах пурри паллă. “Ыррин ури кĕске”, – теççĕ те, тен, чăнах та çапла.

Милици ĕçченĕсем мартăн 11-мĕшĕнче Турай ял тăрăхĕнчи лару-тăрупа паллашма шутланă. Мĕнех, “Суррогат” операци ăнăçлă иртнĕ. Çулав ялĕнчи 1958 çулта çуралнă хĕрарăм эрех сутнине юнашар ялсем те аван пĕлнĕ иккен. Çапла вара Уйкас Турай ялĕнчи пĕр çынна 1,5 спирт пур шĕвеке 30 тенкĕпе сутнă, кăсăруклисем вара тытнă.

Çак кунах Çулав ялĕнчи 1954 çулта çуралнă арçын 1литр спирт пур шĕвеке 30 тенкĕ çинчен çак ялта пурăнакан арçынна сутать. Çапах та ан манса кайăр, вĕренĕн вĕçĕ пур.

# Ял хуçалăхне пулăшаççĕ е…

Паянхи кун ял хуçалăх предприятийĕсем чăнахах та йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкни пирки калаçаççĕ. Туса илнĕ продукци хакĕсем пĕчĕк, сĕрмелли-çунтармалли материалсен хакĕсем вара, ай-ай, çыртаççĕ. Çитменнине тата хуçалăх пӳлмисене кукăр алăллисем тапăннă тет! Эсир илтмен-и? Апла пулсан пĕлтерер-ха.

Акă, мартăн 20-мĕшĕнче ирхи сакăр сехетре Мăн Тутаркас ялĕнчи 1955 çулта çуралнă арçын “Передовик” хуçалăхалла çул тытать. Çук, пачах ĕçлес шухăшпа мар. Çапла вара хуçалăхăн кролик ĕрчетекен тырă складне çитет. Ара, хуçалăх халĕ çирĕп мар пулин те малтан аптраман пулĕ. Çак арçын кукăр аллипе 40 литр кĕрекен алюминирен тунă 2 бидона çаклатса тухать. Халĕ çакăн пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çак çул çӳреве 52 çулхи арçын ăнăçлисен шутне кĕртет те 17 сехетре татах çула тухать. Хальхинче пĕччен мар. Хăйпе пĕрле 1994 çулта çуралнă яша илсе каять. Çапла вара 40 литр кĕрекен тепĕр бидона тата 30 литр кĕрекен хурана илсе тухаççĕ. Анчах та фермăра ĕçлекен ачасем асăрхаççĕ çаксене, вăрланă япаласене пăрахма кăшкăрсан вăрăсем тараççĕ. Хальхинче вара РФ УК 161 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Ку çеç те мар, арçын çул çитмен çамрăка преступлени çулĕ çине тăратать. Апла пулсан ун çумне татах 152 статьян иккĕмĕш пайĕ хушăнать. Акă ăçта илсе çитерчĕ те ĕнтĕ 52 çулхи арçынна ют пурлăха хапсăнни. Анчах, темшĕн-çке, çын йăнăшĕ çинче мар, хамăрăнни çинчех вĕренетпĕр.

Хуракасси выççăлккинче 1985 çулта çуралнă арçын тата Отарккă ялĕнче 1986 çулта çуралнă çын Кашмаш ялĕнче пурăнакан арçынпа кавар тăваççĕ. Çапла вара “Свобода” хуçалăхăн АТПăн хураллакан территорине кĕреççĕ. Автомашинăсенчен сĕрмелли-çунтармалли материала юхтарса илме тата виçĕ паяльнăй лампа вăрлама пикенеççĕ. Халĕ кăсăруклисем кукăр алăллă арçынсем пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарасси çинчен шутлаççĕ.

# Çунатлă “Филиппс”

Мартăн 19-мĕшĕнче 17-18 сехетсенче “Филиппс” маркăллă, тĕслĕ çĕнĕ телевизорăн çунат шăтнă пулас. Йӳçкасси ялĕнчи пĕр хуçалăх умĕнче лартса хăварнăскер кĕске самантрах куçран çухалнă. Ак тамаша, 5215 тенкĕ тăраканскер хăш еннелле тарнă-ши? Çак “правур” çын кам пулнă-ши? Çав териех инçе вĕçнĕ пек туйăнмасть-ха.

# Çепĕç сăмахсем малтанлăха кăна-и?

Мĕншĕн-ха ытла хăвăрт манăça тухаççĕ ырă самантсем. Ăçта кайса кĕреççĕ-ши тата туй кĕрекинче, ĕмĕр вĕçне пĕрле килĕштерсе утса тухасчĕ, сана эпĕ сивĕ сăмах каламăп, тесе каланă каччă сăмахĕсем? Çапла вара çулсем иртнĕ çемĕн упăшка çаварĕнчен: “Вĕлеретĕп!”, “Тухса кай!” тенисем илтĕнеççĕ. Ку вара пурнăç чăнлăхĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен çакă чылай çемьере тĕл пулать.

Йĕркеллĕ çынсем кун йĕркине пăхăнаççĕ. Апатлану вăхăтĕнче çиеççĕ, кану вăхăтĕнче канаççĕ. Анчах та Оринин ял тăрăхне кĕрекен Мулкачкасси ялĕнчи 40 çулхи арçын кун йĕркине ылмаштарса янă пулмалла. Мартăн 20-мĕшĕнче 24 сехетре хирĕçӳ кăларать. Коммунал урамĕнче пурăнаканскер, арăмне кӳрентерет. Ку çеç те мар, ăна майĕнчен пăвса вĕлерессипе хăратать. Çакăн пирки халĕ РФ УК 119 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Акă Катькас ял тăрăхне кĕрекен Катькас ялĕнчи Тĕп урамăн пĕр çуртĕнче хирĕçӳ тухать. Мартăн 19-мĕшĕнче 16 сехетре 43 çулхи арçын арăмне хĕнет, сывлăхне хавшатать. Пӳтсĕрскер, çынна хĕнени мĕн патне илсе пынине тата саккунсене пĕлмен пулас. Çавăнпа та çитес вăхăтра шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансем РФ УК статйипе питĕ тĕплĕн паллаштарĕç. Намăса çухатнă арçын ун пирки чылайччен манса каймĕ.

**Шалти ĕçсен пайĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаются плиты перекрытия (ПКЖ) б-у, размер 6.0м.х1.5м., погрузка.**
**Телефон: 8-917-658-04-19.**

**6 апреля в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**В деревне Старые Мадики в двухквартирном доме продается трехкомнатная квартира площадью 67 кв.м. Индивидуальное отопление, газовая колонка,туалет, ванна, гараж, приусадебный участок 0,40 га земли.**
**Телефон: 8-927-863-09-88.**

**Спутниковое телевидение, от 4 тыс. рублей, с установкой. Гарантия.**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 3-6.**

**Продаем цемент М-400 50 кг, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15 метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.**

**На постоянную работу в ООО «Моргаушрайбыт» требуются: энергетик, парикмахеры, швеи, требование – опыт работы, мастер-наладчик швейных машин – образование и опыт работы не требуется.**
**Контактный телефон: 2-18-40. 1-4.**

**МУП ЖКХ «Моргаушское» объявляет о переносе работы бани с. Моргауши с 8 апреля (воскресенье) на 7 апреля (суббота) 2007 г. в связи с празднованием Пасхи.**


ЧР Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ райадминистрацин финанс пайĕн ертӳçин çумĕн Н.А. Данилован ашшĕ

**Алексей Васильевич ТОЛСТОВ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш район администрацийĕн финанс пайĕ кунта ертӳçĕн çумĕ пулса ĕçлекен Н.А. Данилован ашшĕ

**Алексей Васильевич ТОЛСТОВ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Панклири шкул коллективĕ кунта кĕçĕн классен учителĕнче ĕçлекен Л.И. Кириллован

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**



АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru



Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3486.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 03.04.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.